27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 МАЙ 28 ВЫРСАРНИКУН 105(6600) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Ҫӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Торф промышленноҫӗнчи мӗнпур рабочисемпе работницӑсене тата инженерла-техникла работниксемпе служащисене

Шатурӑри торф трестӗн предприятийӗсен коллективӗ чӗнсе калани

Хаклӑ юлташсем!

Сталин юлташ Майӑн 1-мӗшӗ ячӗпе панӑ приказра Хӗрлӗ Ҫарпа пӗтӗм совет халӑхӗ умне ҫакӑн пек историллӗ задача хурать: пирӗн пӗтӗм ҫӗре фашистла захватчиксенчен тасатмалла, Совет Союзӗн государство чиккине Хура тинӗсрен Баренц тинӗсне ҫитиччен [illegible]

Ҫав задачӑсене пурнӑҫламашкӑн пирӗн пурин те ҫӗнӗрен [illegible] ӗҫлемелле.

Май уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртура Шатурӑри предприятийӗсен коллективӗсем хӑйсен ӗҫне нумай лайӑхлатрӗҫ, пирӗн трестри Петровско-Кобелевски торф предприятийӗ Оборона Государственнӑй Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илчӗ. Анчах та эпир туни ҫитмест. [illegible] торф кӑлармалли [illegible] плана кулленех ирттерсе тултармалла, электростанцисене пӗр чарӑнмасӑр лайӑх топливо пара тӑмалла пулать.

Торф кӑлармалли государство планне пӗтӗмпех тата [illegible] электростанцисене [illegible] пирӗн фронт валли самолетсем, танксем, хӗҫпӑшалсем, боеприпассем [illegible] ытларах кӑларса тӑма [illegible]

Сталин юлташӑн Майӑн 1-мӗшӗ ячӗпе панӑ приказне [illegible] эпир хамӑр ҫине ҫакӑн пек обязательствӑсем илетпӗр:

1. Государство планӗпе ирттерсе 75.000 тонна торф кӑлармалла.

2. Электростанцисене [illegible] торф [illegible] 1944 ҫулхи ноябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне электростанцисен складӗнче 100.000 тонна торф запас туса хумалла.

3. Ӗҫ тухӑҫлӑхне [illegible] ытларах ӳстермелле: [illegible] —10 процент, торф тиес ӗҫре—5 процент.

4. 1944 ҫулта торфӑн хӑйне ларакан хакне [illegible] 14 процент чакармалла.

5. Кӑларакан торфӑн пахалӑхне ӳстермелле, [illegible] 36 процентран ытла, [illegible] 42 процентран ытла пулмалла мар.

6. 1944 ҫулта гидроторф хирӗсене 1.200 гектар чухлӗ [illegible]

7. Подсобнӑй хуҫалӑхсенче [illegible] 15 процент, [illegible] 200 гектар ӳстермелле, [illegible]

Торфниксем юлташсем!

Эпир сире [illegible]

Сывӑ пултӑр пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар па Тинӗс-Ҫар Флочӗ!

Сывӑ пултӑр пирӗн юратнӑ ҫулпуҫ [illegible] Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ!

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАЙӐН 26-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Майӑн 26-мӗшӗнче фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Майӑн 25-мӗшӗнче сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 18 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРӖН АВИАЦИ БАРЕНЦ ТИНӖСӖНЧЕ ТӐШМАН ТРАНСПОРЧӖСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ҪАПНИ

Пирӗн сывлӑшри разведка Баренц тинӗсӗнче тӑшман конвойне курнӑ, ҫав конвойра 5 транспорт, 5 миноносец тата хуралласа пыракан ытти карапсем те пулнӑ. Флот авиацийӗ майӑн 26-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле темиҫе хутчен йышлӑн вӗҫсе кайса тӑшман суднисене бомбӑсем пӑрахса штурмланӑ тата торпедӑсем янӑ. Ҫапла тапӑнса, нимӗҫсен пӗтӗмпе 15.000 тоннӑна яхӑн таякан 2 транспортне, пӗр миноносецне тата хуралта ҫӳрекен пӗр карапне шыва путарнӑ. Тӑшманӑн транспорчӗпе ытти карапӗсене чылай вӑйлӑ сиенленӗ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче, малтанлӑха пӗлтернӗ тӑрӑх, нимӗҫсен 10 самолетне персе ӳкернӗ. Пирӗн 7 самолет хӑйсен базисене таврӑнман.

☆ ☆ ☆

Станислав хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре тӑшман пехотин батальонӗ пӗр ҫӳллӗ вырӑн районӗнче ҫӗрле пирӗн позицисене атакӑланӑ. Малтан нимӗҫсен уйрӑм ушкӑнӗсем пирӗн оборонӑн малти хӗрринчи траншейисене кӗрсе кайнӑ. Унтан пирӗн пӗр чаҫӑн боецӗсем татӑклӑн контратака тунӑ та тӑшмана хӑваласа янӑ, хӑйсен позицийӗсене каллех тытса илнӗ. Траншейӑсенче тӑшманӑн 50 вилли выртса юлнӑ. Тыткӑна илнисем пур. Пирӗн авиаци тӑшманӑн ҫулӗ́йӗрӗсене пыра-пыра ҫапнӑ. Совет летчикӗсем 3 паровоз, 30 вагон ытла, 20 автомашина пӗтерсе тӑкнӑ, темиҫе участокра чугун ҫула ишнӗ.

* * *

Тирасполь хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре икӗ енӗ те пӗр-пӗрин ҫине артиллерирен тата минометсенчен персе тӑнӑ. Совет разведчикӗсем пӗр ҫырмара нимӗҫ пехоти пухӑнса тӑнине пӗлнӗ. Пирӗн артиллеристсем ҫав ҫырма тӗлне вӑйлӑн пенӗ те гитлеровецсене 3 ротӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Украинӑри 2-мӗш фронтӑн пӗр участокӗнче снайпер Бочаров юлташ, пирӗн оборонӑн малти хӗрри хыҫӗнче засадӑра ларса, кун каҫиччен 24 нимӗҫе вӗлернӗ. Икӗ кун иртсен, ҫав участокра пирӗн разведчиксем вӗлернӗ нимӗҫ офицерӗн дневникне кӑларса илнӗ. Ҫав дневникра ҫапла ҫырса хуни пур: «Паян пире вырӑс снайперӗ пӗтӗмпе канӑҫ памарӗ. Унӑн пульлисенчен нумай ҫын пӗтрӗ: 18 рядовой, 3 унтер-офицер. Рота командирӗ Отто Крюгер та пӗтрӗ. Ҫав вырӑс питӗ тӗл перекен ҫын пулмалла. Унӑн пур пульлисем те тенӗ пекех ҫамкана е куҫсене лекнӗ. Кам-ши ҫав стрелок?». Ҫак сӑмахсене вӑл снайпер Бочаров юлташ засадӑран пенӗ кун ҫырнӑ.

* * *

Латыш партизанӗсен «Виестурс» ятлӑ отрячӗ икӗ эрне хушшинче нимӗҫсен 4 ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Пӗр поезда вӑл чугун ҫул кӗперӗ урлӑ каҫнӑ вӑхӑтра сирпӗнтерсе янӑ. Кӗперӗ те вара ишӗлсе аннӑ, паровозпа 7 вагон шыва путнӑ. 100 гитлеровец ытла пӗтнӗ. Ҫав участокра вара поездсем 3 талӑк хушши ҫӳреймен.

* * *

Нимӗҫсен верховнӑй командованийӗ «Ҫарсене пӗлтерме» ятлӑ бюллетень кӑларса тӑрать. Ҫак бюллетенӗн 1941 ҫулта кӑларнӑ 87-мӗш номерӗнче «ыйтусемпе ответсем» ятлӑ пайра пӗр нимӗҫ ефрейторӗн ыйтӑвне пичетленӗ. Ефрейтор ҫапла ыйтнӑ: «Тыткӑна илнӗ поляк салтакӗсене Российӑна хирӗҫ вӑрҫтарма юрамасть-ши, вара нумай нимӗҫсен юнӗпе пурнӑҫне сыхласа хӑварма пулнӑ пулӗччӗ?». Бюллетень редакцийӗ ҫав ефрейтора ҫакӑн пек ответ панӑ: «Тыткӑна лекнӗ поляк салтакӗсем Германире тӗрлӗ ҫӗрте ӗҫлеҫҫӗ, вӗсене эпир нимӗн тӳлемесӗрех ӗҫлеттеретпӗр, ку пире питӗ килӗшет... Анчах ҫапах та ӑпӑлтасене ларма юрамасть... Поляксен аллине хӗҫпӑшал шанса пама юрамасть, мӗншӗн тесен вӑл хӗҫпӑшалпа вӗсем пире хирӗҫ вӑрҫма пултараҫҫӗ». Анчах та ҫавӑн пек татса калана пулин те, гитлеровецсем 1942 ҫулхи ҫуркуннеренпе пуҫласа поляксене нимӗҫ ҫарне вӑйпа илме тытӑннӑ. Ытла лайӑх пурнӑҫран ҫавӑн пек хӑтланмаҫҫӗ ӗнтӗ гитлеровецсем. Фашистла нимӗҫ ҫарӗсен Совет Союзӗпе Германи фронтӗнче тӳснӗ питех те пысӑк ҫухатувӗсем Гитлера хӑйӗн пӗтсе ларнӑ дивизийӗсем вырӑнне ирӗксӗрех ҫынсем шыраттарнӑ. Анчах та Польшӑн тӳрӗ патриочӗсем нимӗҫсем енче ҫапӑҫасшӑн мар. Аялтарах Хӗрлӗ Ҫар енне куҫнӑ Германи ҫарӗнче тӑнӑ поляксем мӗн каласа панине пичетлетпӗр.

Нимӗҫсен 14-мӗш пехотнӑй дивизийӗнче пулнӑ салтак Францишек М. ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Нимӗҫ фашисчӗсем яланах пурте илтмеллех ҫапла калатчӗҫ: поляксем ҫынсем пулса ҫитеймен-ха, тетчӗҫ, вӗсем аслӑ нимӗҫ расинчи господасем патӗнче чурасем пулса кӑна ӗҫлеме пултараҫҫӗ, тетчӗҫ. Анчах та халӗ нимӗҫсен салтаксем ҫитми пулчӗҫ, вара Гитлер поляксене фашистсен Германийӗшӗн вӑрҫтарма тытӑнчӗ. Анчах та нимӗҫсем нихӑҫан та поляксене вырӑссене хирӗҫ тӑратаймӗҫ. Эпир, поляксем, ҫакна шанса тӑратпӑр: эпир вырӑссемпе пӗрле кӑна нимӗҫсене хамӑр тӑван ҫӗршывран хӑваласа кӑларма пултаратпӑр. Ун чухне тин эпир лӑпланнӑ чунпа хамӑр ҫемьесем патне таврӑнӑпӑр. А халӗ манӑн мӗн пурӗ те пӗртен-пӗр тӗллев, пӗртен пӗр шухӑш ҫеҫ — ӗмӗртенпе Польшӑн чи усал тӑшманӗ пулса тӑракан фашистла нимӗҫ захватчикӗсене вӗлерсе пӗтересси».

Нимӗҫсен 100-мӗш егерски дивизийӗнчи 227-мӗш полкра пулнӑ салтак Казимир Б. ҫапла каласа панӑ: «Малти позицисенче эпӗ мӗн пурӗ те 3 кун кӑна пултӑм. Мана 90 патрон пачӗҫ, анчах та эпӗ пӗр патрон та пӗтермерӗм. Хам винтовкӑпа ҫав патронсене пурне те эпӗ вырӑс офицерне патӑм. Нимӗҫсем Польшӑра мирлӗ халӑха хирӗҫ питӗ усал ӗҫсем тӑваҫҫӗ, ун пек ӗҫсене халӑх пӗтӗм хӑй ӗмӗрӗнче манмасӑр астуса тӑрать».

Нимӗҫсен 257-мӗш пехотнӑй дивизийӗнче пулнӑ салтак Владислав К. ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Госпитальтен тухнӑ хыҫҫӑн эпӗ нумай пулмасть килте пултӑм. Хурӑнташсемпе туссем мана эпӗ ҫапӑҫнӑ Германи ҫарӗнче тӑнӑшӑн намӑслантарса пӗтерчӗҫ. Вӗсем мана пурте фронта ҫитсенех вырӑссем енне куҫма хушрӗҫ. Эпӗ ҫавӑн пек турӑм та. Эпӗ сире, мана Польша ҫарне илсе, унӑн ретӗнче нимӗҫсене хирӗҫ ҫапӑҫма май пама ыйтатӑп».

Совет Союзӗпе Англи союзлӑ договор туни икӗ ҫул тултарнӑ ятпа СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ патӗнче пулса иртнӗ ирхи апат

Гитлерла Германие тата Европӑри унпа пӗрле вӑрҫакан ҫӗршывсене хирӗҫ пыракан вӑрҫӑра союзлӑ пулассипе вӑрҫӑ хыҫҫӑн пӗр-перинпе килӗштерсе пӗр-пӗрне пулӑшса тӑрасси ҫинчен ССР Союзӗпе Великобритани хушшинче договор тунӑранпа 2 ҫул тултарнӑ ятпа СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ патӗнче майӑн 26-мӗшӗнче ирхи апат пулнӑ. Апатланура Великобритани посолӗ А. К. Керр господин, Канада посолӗ Д. Уилгресс господин, Австрали посланникӗ Д. Малоней господин, США ӗҫӗсен поверенныйӗ М. Гамильтон господин, Великобританин ҫар миссийӗн членӗсем—контр-адмирал Д. Фишер, бригадир Д. Хилл, полковник Р. Турнер, авиаци подполковникӗ Д. Хьюз, США-н ҫар миссийӗн тинӗс-ҫар секцийӗн начальникӗ контр-адмирал К. Олсен, Великобританин информаци министерствин вырӑс пайӗн халӗ Мускава килнӗ заведующийӗ Г. П. Смолетт господин, ҫавӑн пекех тата Британи посольствин дипломати составӗ пулнӑ. Совет Союзӗ енчен апатланура ҫак юлташсем пулнӑ: А. И. Микоян, адмирал Н. Г. Кузнецов, А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, И. М. Майский, А. Д. Крутиков, генерал-полковник Ф. И. Голиков, авиаци генерал-полковникӗ А. В. Никитин, генерал-лейтенант Ф. Ф. Кузнецов тата СССР Наркоминделӗпе Наркомвнешторгӗн ответлӑ сотрудникӗсем.

В. М. Молотовпа Керр господин Англипе Совет Союзӗ хушшинчи договор икӗ ҫул тултарнӑ май пӗр-пӗрне саламласа кӗске сӑмахсем каланӑ.

Ҫуракине вӗҫлемелли вунӑкунлӑх

Ҫуракинче тухӑҫлӑ та лайӑх ӗҫленӗшӗн, ӗҫҫынни депутачӗсен райсовечӗсен исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп Хӑми ҫине кӗртнӗ:

25. Вӑрнар районӗнчи **Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **М. Я. Яковлев** юлташ, комсомол организацин секретарӗ **И. А. Арсентьев** юлташ). Ҫак колхоз ҫуракине 6 ӗҫ кунӗнче вӗҫленӗ, ӗҫӗн пахалӑхӗ лайӑх, агротехникӑллӑ мероприятисене пурнӑҫланӑ

26. Вӑрнар районӗнчи **«Победа» колхоз** (председателӗ **П. А. Андреев** юлташ, кандидатсен группин руководителӗ **А. А. Алексеева** юлташ). Вӑл тӗштырӑсене 6 кунта акса пӗтернӗ. План тӑрӑх 324 гектар акас вырӑнне 340 гектар акнӑ. Ӗҫӗн пахалӑхӗ лайӑх.

27. Вӑрнар районӗнчи **«Волга» колхоз** (председателӗ **М. И. Иванов** юлташ, партин пуҫламӑш организацин секретарӗ **Михайлов** юлташ). Ҫуракине вӑл 5 кунта пӗтернӗ, агротехникӑллӑ мероприятисене лайӑх пурнӑҫланӑ. Планран ирттерсе 8 гектар акнӑ.

28. Вӑрнар районӗнчи **«Радио» колхоз** (председателӗ **А. Данилов** юлташ, комсомолӑн пуҫламӑш организацин секретарӗ **Е. П. Петрова** юлташ). Ҫак колхоз агротехникӑллӑ мероприятисене лайӑх пурнӑҫланӑ, ҫуракине 6 кунта вӗҫленӗ, планран ирттерсе 8 гектар акнӑ.

29. Йӗпреҫ МТС-ӗн **3-мӗш номер трактор бригади** (бригадирӗ **Ф. Ф. Смирнов** юлташ). Вӑл тракторпа ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне 102 процент тултарнӑ, 627 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

30. Йӗпреҫ МТС-ӗн **11-мӗш номер трактор бригади** (бригадирӗ **В. И. Макаров** юлташ). Вӑл тракторпа ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне 101 процент тултарнӑ, 482 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

Чӑваш АССР Наркомземӗпе ВКП(б) Обкомӗн ялхуҫалӑх отделӗ тӑратнӑ тӑрӑх, тракторпа ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне срокчен пурнӑҫланӑшӑн ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине ҫаксене кӗртнӗ:

31. **Вӑрнар МТС-ӗ** (директорӗ **Ф. С. Никонов** юлташ, пуҫламӑш парторганизацин секретарӗ **Г. И. Мишанов** юлташ, старши механикӗ **П. Е. Николаев** юлташ). Вӑл тракторпа ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне майӑн 19-мӗшӗ тӗлне 100 процент тултарнӑ, 4.440 гектар сухаланӑ.

Чи лайӑх бригадирсем: **К. Г. Тодерянов** юлташ, унӑн бригади тракторпа ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне 113 процент тултарнӑ; **И. Н. Николаев** юлташ, унӑн бригади плана 101 процент тултарнӑ; **И. А. Алексеев** юлташ, унӑн бригади плана 104 процент тултарнӑ.

32. **Йӗпреҫ МТС-ӗ** (директорӗ **Г. И. Иванов** юлташ, пуҫламӑш парторганизацин секретарӗ **Г. С. Мамонтов** юлташ, старши механикӗ **П. Н. Михайлов** юлташ). Вӑл тракторпа ҫуркунне тумалли ӗҫсен, планне майӑн 20-мӗшӗ тӗлне 101,5 процент тултарнӑ, 3.890 гектар вырӑнне 3.948 гектар сухаланӑ.

Чи лайӑх бригадирсем: В. И. Макаров юлташ, унӑн бригади тракторпа ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне 128 процент тултарнӑ, 687 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ; **П. П. Семенов** юлташ, унӑн бригади плана 127 процент тултарнӑ, горючие 823 килограмм перекетлесе хӑварнӑ; **Е. И. Яковлев** юлташ, унӑн бригади плана 102 процент тултарнӑ тата 428 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ; **П. М. Мартьянов** юлташ, унӑн бригади плана 101,8 процент тултарнӑ, 590 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

Чи лайӑх трактористсем: А. М. Макаров, П. Чураков, Е. Родионова юлташсем СТЗ тракторпа 55 гектар вырӑнне 85—90-шар гектар сухаланӑ; А. Зорин юлташ ХТЗ—Т2Г йышши газогенераторлӑ тракторпа 90 гектар вырӑнне 132 гектар сухаланӑ: **Е. В. Васильева** юлташ У—2 тракторпа 50 гектар вырӑнне 65 гектар сухаланӑ.

1944 ҫулхи майӑн 25-мӗшӗ тӗлне республикӑри колхозсенче ҫураки ӗҫӗсем мӗнле пынине кӑтартакан СВОДКА

Районсем	Пурӗ акнӑ иртнӗ ҫулхи куракксемсӗр пуҫне (процентпа)	Вӑл шутра: Пӗрчӗллӗ тата пӑрҫа йышши тыррӑсене акнӑ (процентпа)	Ҫӗрулми лартнӑ (процентпа)	Кантӑр акнӑ (процентпа)	Йӗтӗн акнӑ (процентпа)
Красноармейски	93,7	100,0	81,7	83,0	—
Ҫӗрпӳ	93,4	100,0	80,5	32,8	—
Чурачӑк	92,5	98,1	72,2	61,7	—
Вӑрнар	91,2	109,4	68,0	93,3	75,0
Элӗк	89,5	101,2	20,5	36,0	—
Шупашкар	89,0	99,9	42,7	—	—
Калинин	88,5	100,6	72,7	13,8	—
Сӗнтӗр	87,9	95,0	51,7	45,2	—
Муркаш	86,1	96,7	28,8	15,0	—
Сӗнтӗрвӑрри	85,2	101,7	31,3	8,7	—
Елчӗк	83,1	93,0	31,5	34,7	—
Октябрьски	82,7	93,5	40,2	20,0	—
Тӑвай	82,6	97,5	18,0	3,0	—
Шӑхасан	81,3	88,7	41,3	21,6	—
Куславкка	78,8	92,0	24,9	—	—
Вӑрмар	78,0	93,3	10,1	8,2	—
Советски	77,1	82,1	64,1	78,6	—
Етӗрне	73,6	94,7	6,2	35,7	20,0
Канаш	72,7	87,5	12,3	11,2	—
Комсомольски	72,3	78,6	14,2	24,0	—
Ишлей	71,3	81,6	23,6	—	—
Чкаловски	65,4	78,3	18,6	21,4	—
Йӗпреҫ	64,6	81,3	9,2	25,0	10,0
Улатӑр	58,2	66,3	4,0	—	4,8
Первомайски	57,7	65,9	7,8	21,5	13,0
Ҫӗмӗрле	56,5	69,8	16,3	29,0	27,6
Пӑрачкав	56,2	62,9	22,8	—	23,3
Шӑмӑршӑ	54,7	63,7	13,0	2,8	12,0
Хӗрлӗ Чутай	50,1	65,0	7,6	10,7	—
Кувакино	43,6	50,5	5,5	—	10,2
Шупашкар хули	86,1	125,6	52,0	—	—
Пӗтӗмпе	76,2	86.9	33,4	31,7	19,2
Майӑн 20-мӗшӗ тӗлне пулнӑ:	61,6	71,8	7,9	—	8.2

Агротехникӑна пурнӑҫлаҫҫӗ

ИШЛЕЙ. Салабайкасси ялсоветӗнчи «Агроном» колхоз, агротехника мероприятийӗсене ҫирӗп пӑхӑнса пырса тата МТС пулӑшӑвӗсӗрех, ирхи тырӑсене акса пӗтерчӗ. Халӗ ҫӗрулми лартас ӗҫ анлӑн пырать. Акара лашасемсӗр пуҫне 5 вӑкӑрпа сухаларӗҫ.

Вӑрлӑх участокӗсене формалинпа чӳхенӗ вӑрлӑх акнӑ. 8 гектар ҫине сортлӑ пӑрҫа акнӑ. Ҫӗрулми вӑрлӑхӗн пӗр пайне яровизацилен. 15 гектар кӗрхи калчасене тислӗк шывӗпе апатлантарнӑ. 7 гектар тулӑ, 4 гектар урпа ҫинче вакӑ улӑмпа мульчированин тунӑ.

Сӗнтӗрвӑрри МТС-ӗ тракторсемпе ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне тултарнӑ

СӖНТӖРВӐРРИ, майӑн 27-мӗшӗ. (Телефонпа). Паян МТС (директорӗ **Ф. С. Ижутов**) тракторсемпе ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне 101,5 процент тултарчӗ. План тӑрӑх 1985 гектар сухаламалла пулнӑ, 2014 гектар сухаланӑ.

Ҫураки вӑхӑтӗнче уйрӑмӑнах тракторсен 1-мӗш номерлӗ бригади (бригадирӗ С. Григорьев юлташ) аван ӗҫленӗ, вӑл хӑйӗн планне 131 процент тултарнӑ, Трактористсем А. Коротковпа С. Дмитриев юлташсем сменӑри задание 45-шер гектар сухалас вырӑнне 65—69 гектар сухаланӑ.

Тракторсен 3-мӗш номерлӗ бригади (бригадирӗ Н. Григорьев юлташ) плана 104 процент тултарнӑ.

Ҫуркуннехи ӗҫсене тӑвасси малалла та пырать.

Малта пыракан колхозсем акса пӗтерчӗҫ

ШӐМӐРШӐ, майӑн 23-мӗшӗ. (Телефонпа). Малта пыракан колхозсем «Заря свободы» (председателӗ Корчагин), «Знамя Октября» (председателӗ Будряшов), Космовский ячӗпе тӑракан тата ытти колхозсем тӗштырӑсене акса пӗтерчӗҫ. Халӗ вӗсем ҫӗрулми лартаҫҫӗ, пахча-ҫимӗҫ тата кантӑр акаҫҫӗ.

Анчах та нумай колхозсем ака ӗҫне ытла та вӑрӑма тӑсаҫҫӗ. «Красная звезда» (председателӗ Антонов) «Кзыл юл» (председателӗ Найметов), «Труженник» (председателӗ Никифоров). Уйрӑмах юлса пыраҫҫӗ. Унта ҫак вӑхӑта ҫитсе те 50—60 процент кӑна акнӑ. «Правда» колхозра (председателӗ Осипова юлташ) агротехникӑна пӑсаҫҫӗ, лайӑх тасатман пӑрҫа вӑрлӑхне хӑмӑл ҫинех акнӑ, шӑйрӑклӑ сухалаҫҫӗ, вӑрлӑха яровизацилемен.

МТС тракторӗсем калама ҫук япӑх ӗҫлеҫҫӗ, вӗсем паянхи кун тӗлне пурӗ те 1.117 гектар ҫеҫ сухаланӑ. Ҫӗрле тракторсемпе ӗҫлемеҫҫӗ. Ҫак кунсенче, МТС директорӗ Курмаев юлташ ҫаврӑнӑҫусӑр ӗҫленипе, тракторсем виҫӗ кун хушши ӗҫлемесӗр ларчӗҫ. Старши механик Фадеев юлташ та трактористсемпе трактористкӑсене кирлӗ пек пулӑшса пымасть. Ҫавна пула ӗнтӗ тракторсем час-часах пӑсӑлаҫҫӗ, ӗҫлемесӗр лараҫҫӗ.

Ирхи ҫӗртме тӑваҫҫӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майӑн 27-мӗшӗ. (Хамӑр корр.). Районӑри колхозсем, ҫуракине вӗҫлемелли фронтовой вунӑкунлӑха хутшӑнса, ҫӗрулми лартассине тата пахча-ҫимӗҫсемпе кантӑр акассине ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗҫ, суртыррисене акса пӗтерчӗҫ.

Ҫуракине ӑнӑҫлӑ вӗҫленӗ хыҫҫӑн нумай колхозсем ирхи ҫӗртме тӑвас ӗҫе пуҫӑнчӗҫ. «Красный пахарь» колхоз паянхи кун тӗлне 24 гектар ирхи ҫӗртме турӗ. «Красное Сормово» колхоз (председателӗ Осипов юлташ) пур тӗрлӗ тырӑсене те акса пӗтернӗ хыҫҫӑн ирхи ҫӗртме тума тытӑнчӗ, 18 гектар сухаларӗ.

«Красноармеец» колхоз ҫулсеренех юлса пыратчӗ, кӑҫал вӑл малта пыракансен ретне тухрӗ. Пахча-ҫимӗҫсене тата колхозниксен кил вырӑнӗсене ҫӗрулми лартса пӗтернӗ хыҫҫӑн 14 гектар ҫӗртме турӗ.

«12 лет Октября» колхоз (председателӗ Васильев юлташ) пысӑк тухӑҫлӑ тыр пулшӑн тимлӗн кӗрешет. Кунта тырӑсем ҫинчи ҫумкурӑксене тасатсах тӑраҫҫӗ. Ҫумкурӑксемпе кӗрешме уйрӑм звено тунӑ. Ҫак звено кӗрхи тырӑсене тата 26 гектар суртыррине ҫумкурӑксенчен тасатнӑ.

Фермӑсем ҫумӗнчи участоксене 1000 гектар акнӑ

Республикӑри колхозсем фермӑсем ҫумӗнчи участоксене акас ӗҫе кашни кунах ӳстерсе пыраҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе Ҫӗрпӳ районӗ малта пырать, вӑл 168 гектар акса плана 63 процент тултарнӑ, ун хыҫҫӑн Вӑрмар районӗ 62,5 процент акнӑ, Калинино районӗ 42 процент, Вӑрнар районӗ 30 процент акнӑ.

Анчах та чылай районсенчи колхозсем фермӑсем ҫумӗнчи участоксене пачах акма тытӑнман. Первомайски, Шӑмӑршӑ, Советски районсем ҫак вӑхӑта ҫитсе пӗр гектар та акман. Улатӑр районӗнче 5 гектар, Ишлей районӗнче 4 гектар, Октябрьски районра 4 гектар, Ҫӗмӗрле районӗнче 5 гектар кӑна акнӑ. Калас пулать, ҫураки ӗҫӗнче малта пыракан Шӑхасан районӗнче те ҫак ӗҫе пачах тытӑнман.

Паянхи кун тӗлне республикӑри колхозсем фермӑсем ҫумӗнчи участоксене 1000 гектар ытларах акнӑ, вӑл пурӗ те 17 процента яхӑн ҫеҫ пулать. Фермӑсем ҫумӗнчи участоксене ҫуракине вӗҫлемелли фронтовой вунӑкунлӑхра пӗтӗмӗшпех акса пӗтермелле

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ „Чăваш Коммуни" 85-мĕш, 92-мĕш, 94-мĕш, 95-мĕш 96-мĕш, 98-мĕш, 99-мĕш, 100-мĕш, 101-мĕш тата 102-мĕш номерĕсенче).

ЧКАЛОВСКИ РАЙОН ТĂРĂХ

11. Миникемаль Гинятулловна **Махмутовăна** — «Звезда» колхозăн пăру пăхаканне.

12. Елизавета Пантелеевна **Мишкинана** — «Çăлтăр» колхозăн агрономне.

13. Евдокия Поликарповна **Петровăна** — машинно-тракторнăй станции трактористкине.

14. Семен Иванович **Рыбакова** — «Çăлтăр» колхозăн старши кĕтӳçине.

15. Петр Ильич **Урукова** — «Канаш» колхозăн ферма заведующине.

16. Гайнулла Хуснутдинович **Хуснутдинова** — «Кзыл Тан» колхозăн агротехнике.

17. Анна Николаевна **Юмановăна** — «Канаш» колхозри уйăхир бригадин бригадирне.

18. Мария Евграфовна **Юмановăна** — «Канаш» колхозăн сысна пăхаканне.

ЧУРАЧĂК РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Ирина Анисимовна **Анисимовăна** — Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.

2. Евдокия Афанасьевна **Афанасьевăна** — «Борец» колхозăн колхозницине.

3. Гаврил Петрович **Бурмистрова** — «Красная поварня» колхозăн председательне.

4. Константин Васильевич **Васильева** — «Родина» колхозăн председательне.

5. Николай Виссарионович **Виссарионова** — «Красное Сормово» колхозăн председательне.

6. Гурий Ефремович **Ефремова** — «Прогресс» колхозăн председательне.

7. Филипп Данилович **Данилова** — «Буганар» колхозăн хурт-хăмăр пăхаканне.

8. Федор Димитриевич **Димитриева** — Чкалов ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.

9. Константин Ильич **Ильина** — «Шумаждар» колхозăн председательне.

10. Яков Ильич **Ильина** — Чурачăк ялсовет исполкомĕн председательне.

11. Ефимия Михайловна **Михайловăна** — «Большевик» колхозăн колхозницине.

12. Яков Иванович **Музалова** — «Молодая сила» колхозăн председательне.

13. Прохор Семенович **Орешкина** — «Красная Армия» колхозăн пахча-çимĕç бригадирне.

14. Андрей Павлович **Павлова** — «Сила» колхозăн председательне.

15. Анна Петровна **Петровăна** — «Родина» колхозăн колхозницине.

16. Евдокия Порфирьевна **Порфирьевăна** — «Союз» колхозăн сысна пăхаканне.

17. Андрей Семенович **Семенова** — Паваркасси ялсовет исполкомĕн председательне.

18. Нина Степановна **Степановăна** — «Молодая сила» колхозăн ĕне сăваканне.

19. Яков Федорович **Федорова** — райçĕрĕç пайĕн заведующине.

20. Андрей Фомич **Фомина** — «Новая сила» колхозăн сурăх пăхаканне.

21. Сергей Алексеевич **Яркова** — «Прогресс» колхозри уйăхир бригадин бригадирне.

ШАМАРША РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Алексей Васильевич **Аверьянова** — МТС комбайнерне.

2. Александр Григорьевич **Алешева** — МТС слесарьне.

3. Ольга Матвеевна **Бабаевăна** — «Победа» колхозăн звеньеводне.

4. Калиса Алексеевна **Гришняковăна** — «Искра» колхозăн хурт-хăмăр пăхаканне.

5. Нина Васильевна **Даниловăна** — «Динамо» колхозăн сысна пăхаканне.

6. Василиса Семеновна **Игнатьевăна** — «Мотор» колхозăн кок-сагыз лартса ӳстерекен звеньеводне.

7. Никандр Васильевич **Камкина** — МТС трактористне.

8. Евгения Ивановна **Козловăна** — МТС трактористкине.

9. Степан Семенович **Козлова** — «Красная звезда» колхозăн пахча-çимĕç астаçине.

10. Матрена Васильевна **Максимовăна** — «1-ое Мая» колхозăн колхозницине.

11. Дарья Константиновна **Нестеровăна** — «Мокш» колхозăн ферма заведующине.

12. Василий Алексеевич **Тимофеева** — «Заря» колхозăн председательне.

13. Ольга Ивановна **Чугуновăна** — «Искра» колхозăн старши конюхне.

14. Ольга Михайловна **Явкинăна** — «Светлый путь» колхозăн ĕне сăваканне.

ШĂХАСАН РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Дмитрий Андреевич **Андреева** — «Память Ильича» колхозăн председательне.

2. Александра Антоновна **Антоновăна** — «Трактор» колхозри уйхир бригадин бригадирне.

3. Любовь Архиповна **Архиповăна** — «Березовка» колхозăн бригадирне.

4. Иван Васильевич **Васильева** — «Красный партизан» колхозăн председательне.

5. Иульяна Ермолаевна **Волковăна** — Куйбышев ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизацин секретарьне.

6. Мария Григорьевна **Григорьевăна** — «Чуваш ЦИК» колхозăн колхозницине.

7. Федора Даниловна **Даниловăна** — машинно-тракторнăй станции трактористкине.

8. Иван Семенович **Долгова** — машинно-тракторнăй станции трактористне.

9. Иван Захарович **Захарова** — «Победа» колхозăн председательне.

10. Зинаида Ивановна **Ивановăна** — машинно-тракторнăй станции трактористкине.

11. Нина Ивановна **Ивановăна** — машинно-тракторнăй станции трактористкине.

12. Иван Иванович **Иванова** — ВКП(б) райкомĕн инструкторне.

13. Зинаида Сатировна **Казанскаяна** — райçĕрĕç пайĕн агрономне, пахча-çимĕç астаçине.

14. Мария Филипповна **Наховскаяна** — Киров ячĕпе тăракан колхозăн бригадирне.

15. Михаил Сергеевич **Кузьмина** — ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.

16. Анисия Македоновна **Македоновăна** — «Орешино» колхозăн колхозницине.

17. Николай Матвеевич **Матвеева** — ВКП(б) райкомĕн иккĕмĕш секретарьне.

18. Мария Михайловна **Михайловăна** — «Победа» колхозăн кок-сагыз бригадирне.

19. Ольга Михайловна **Михайловăна** — «Новый путь» колхозăн колхозницине.

20. Иван Моисеевич **Моисеева** — машинно-тракторнăй станции трактор бригадин бригадирне.

21. Иван Никитич **Никитина** — Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Шăхасан районĕнчи уполномоченнăйне.

22. Марфа Никитична **Никитинăна** — «Березовка» колхозри уйхир бригадин бригадирне.

(Малалли пулать).

Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевĕ

Ӳкерчĕк çинче: Шупашкарти хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчи 8-мĕш класра вĕренекенсем çар ĕçне мĕнле пĕлнине тĕрĕслеççĕ.

П. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Тĕрĕслеве начар организациленĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ, майăн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Район центрĕнчи вăтам шкулта пĕлӳ тĕрĕслевĕн малтанхи кунĕсенчех вĕренекенсене чылай предметсемпе çирĕп пĕлӳ парайманни тата тĕрĕслеве тивĕçлипе организалеменни палăрчĕ. 7-мĕш класра географипе тĕрĕслӳ пулса иртрĕ. Географие учительница Плаксина вĕрентнĕ. Тĕрĕслевре чылай вĕренекенсем Белоруссипе Украина тата ытти союзлă республикăсене карта çинче тĕрĕс кăтартса пама пултараймарĕç. Ку ĕнтĕ Плаксина юлташ ачасене çирĕп пĕлӳ парассишĕн çителĕксĕр тăрăшнине кăтартса парать.

10-мĕш класра вĕренекенсем вырăс чĕлхине начар пĕлеççĕ. Учительница В. Михайлова, ачасене начар вĕрентнине пытарас шутпа пулас, тавçăрса илме пулăшмалли ыйтусем парать тата ыйтусем çине тӳрремĕнех ответлеме пулăшать. Çапла вăл инструкцие пăсса, пĕлӳ пахалăхне тĕрĕс хаклама чăрмантарать.

Учительсем тата шкул дирекцийĕ ачасене тĕрĕслеве явăçтарассишĕн тăрăшмаççĕ. Пĕлӳ тĕрĕслевĕ пуçланнăранпа шкула кашни кунах 7—10 ача пымаççĕ. Ачасене тĕрĕслеве пурне те явăçтарас тĕлĕшпе комсомол организацийĕ те татăклă мерăсем йышăнман.

Районри ытти шкулсенче те инструкцие пăснисем пулнă. Райçутĕç пайĕн тата шкул директорĕсемпе учительсен тĕрĕслеве палăрнă çитменлĕхсене халех пĕтерсе, пĕлӳ тĕрĕслевне лайăх инструкци тăрăх ирттермелле тăвас пулать.

З. МИТРОФАНОВА.

Комсомол организацийĕ учительсене пулăшать

ВĂРНАР. Кĕçĕн Кипекри вăтам шкулта пĕлӳ тĕрĕслевĕ пур классенче те ăнăçлăн иртсе пырать. 9-мĕш класра вĕренекенсем хушшинче географипе двойка илекенсем пачах пулмарĕç. Çавăн пекех тĕрĕслӳре ачасем вырăс чĕлхипе литературăна юратни палăрчĕ.

Пĕлӳ тĕрĕслевне ирттерес тĕлĕшпе учительсене комсомол организацийĕ активлăн пулăшать.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Молдавири шкулсем ĕçлеме пуçлаççĕ

Молдавири шкулсенче майăн 31-мĕшĕччен вĕренмелле тунă. Хальхи вăхăтра пĕлӳ тĕрĕслевне вăйлăн хатĕрленеççĕ.

Оккупаци вăхăтĕнче Молдавире Румынсем халăха çутта кăларас ĕçе калама çук пысăк сиен кӳнĕ. Вăрçăччен республикăра 545 туллимар вăтам шкул тата 96 вăтам шкул пулнă. Румыни оккупанчĕсем вĕсене хупса лартнă. 3.000 учителе ытла Румыние вăйпа хăваласа кайнă.

Халĕ шкулсене нумайĕшне юсаса ĕçлеттерме тытăннă. Сорокски уездра 239 шкултан 231-шĕ, Белецки уездра 392 шкултан 290-шĕ ĕçлеççĕ ĕнтĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулталăкĕ пуçланнă тĕлне молдаван чĕлхипе 30 учебника яхăн пичетлесе кăларма палăртнă. (ТАСС).

Паян профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросĕ пуçланать

ВЦСПС секретариачĕпе ВЛКСМ Центральный Комитечĕ йышăннă тăрăх, паян, майăн 28-мĕшĕнче, хуласемпе район центрĕсенче тата поселоксенче профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросĕ пуçланать. Кросс июнĕн 11-мĕшĕччен пырать.

Профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросĕ —массăллă мероприяти. Унăн тĕллевĕ — спорт ĕçне ĕçсыннисене анлăн явăçтарасси, массăллă спорт ĕçне лайăх организацилесе пыракан профсоюз тата комсомол организацийĕсене, спорт обществисене палăртса, вĕсен опытне сарасси пулать. Кросăн программи çав задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме май парать.

Пирĕн республикăри нумай хуласемпе район центрĕсенчи профсоюзпа комсомол организацийĕсем тата спорт обществисем кроса ăнăçлăн ирттерме тимлĕн хатĕрленчĕç. Кросăн малтанхи кунĕнчех ăмăртăва темиçе вунă пин çын хутшăнмалла.

Шупашкарта кросăн малтанхи кунĕнче «Динамо», «Строитель», «Спартак», «Буревестник», «Медик» тата ытти чылай спорт обществисем ăмăртăва хутшăнаççĕ. Ăмăртăва пурĕ 4.000 çынпа яхăн хутшăнмалла. Ăмăрту ирхине 9 сехетре хулари паркра пуçланать. Ăмăрту пуçланас умĕн митинг пулса иртет. Ăмăртура хĕрарăмсемпе ачасем 500 метра, арçынсем 1000 метра тата 3000 метра чупаççĕ. Ăмăртăва кино çине ӳкерме палăртнă.

Канашра малтанхи кун кроса 1.500 çын ытла хутшăнмалла. Кросс пуçланнă кун вагонсем юсакан заводра стадион уçăççĕ. Унта спорт вăййисем пулса иртеççĕ.

Сĕнтĕрвăрринче кроса аслă шкулсенчи студентсем тата учрежденисемпе предприятисенчи çамрăксем хутшăнаççĕ. Унта та хулари стадиона уçаççĕ.

Ют çĕршывсенче

Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ РИМРАН 32 КИЛОМЕТРТА

ЛОНДОН, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕпе акăлчансен 8-мĕш армийĕ çапла малалла куçса пыраççĕ. Акăлчансен 8-мĕш армийĕ «Гитлер линине» татнă хыççăн Вельфа шывĕн леш енче кĕпер умне çирĕплетнĕ. Тăшманăн хăшпĕр подразделенийĕсем хытă хирĕç тăраççĕ, союзниксен çарĕсен малти чаçĕсен флангĕсенче каялла чакмасăр çапăçаççĕ.

Американецсен 5-мĕш армийĕ союзниксен Анцио районĕнчи плацдармри çарĕсен патрулĕсемпе пĕрлешнĕ, халĕ çак арми икĕ фронтра та малалла тапăнса пырать. Союзниксен çарĕсем Витторияна туртса илнĕ (Римран 55 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, Понтински шурлăхсенче), хаяр çапăçусем пулса иртнĕ хыççăн Чистерна хулине туртса илнĕ (Римран 40 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре). Наступлени пуçланăранпа 12.000 çынна ытла тыткăна илнĕ.

Тип çĕр çинчи çарсен наступленине пулăшса пырса, союзниксен çар карапĕсем майăн 24-мĕшĕпе 25-мĕшĕнче тăшманăн Анцио районĕнчи объектсене ăнăçлă персе тăнă. Пушарсем тухнă, взрывсем пулнă. Çавăн пекех тата тăшманăн артиллери позицийĕсемпе пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсене пенĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшман çарĕсемпе унăн вăрçă объекчĕсене хаяррăн тапăнса пынă.

ЛОНДОН, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 5-мĕш армийĕн çарĕсем халĕ Римран мĕнпурĕ те 32 километрта кăна, вĕсем Рима каймалли çул çинчи çирĕплетнĕ паха пункт патнелле — Веллетри хули патнелле хăвăрт çывхарса пыраççĕ. Союзниксем тăшманăн Чистерны хулинчен çурçĕртерехри оборони ăшне ытларах та ытларах савăлланса кĕреççĕ, майăн 25-мĕшĕнче кăнтăр тĕлĕнче çак хуларан 6 километр çурçĕртерехре вырнаçса ларнă пункта çитнĕ.

Союзниксен авиацийĕн летчикĕсем 2 кун хушшинче тăшманăн çулсем çинчи 1.750 автомашинине курнă. Çав автомашинăсенчен çуррине ытла пĕтерсе тăкнă тесе шутлаççĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер союзниксен авиацийĕ тăшманăн Францири аэродромĕсене тапăннă. Çак операцисенчен 45 самолет хăйсен базисене каялла таврăнман.

Ĕнер Берлина тапăннă чухне тăшманăн 77 самолетне персе ӳкернĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер американецсен бомбардировщикĕсем Франципе Бельгири чугун çул сооруженийĕсене тапăннă. Бомбăсем пăрахнине пула Льеж хули çывăхĕнче Маас шывĕ урлă хывнă 3 чугун çул кĕперĕ ишĕлсе аннă.

МИХАЙЛОВИЧ ЧЕТНИКĔСЕМ ПĔТĔМĔШПЕХ НИМĔÇСЕНЕ ПĂХĂНСА ТĂРАÇÇĔ

КАИР, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Халĕ кунта çакна пĕлнĕ: çак çулхи майăн 1-мĕшĕнчен пуçласа Михайлович генералăн пур четникĕсем те пĕтĕмĕшпех нимĕçсене пăхăнса тăраççĕ.

Михайлович четникĕсем халĕ нимĕç материалĕнчен çĕленĕ формăпа çӳреççĕ, çанăсем çине четник паллипе пĕрле фашист паллине çĕлесе лартнă. Четниксене вĕсем камне пĕлтерекен хутсем панă, çав хутсем çине нимĕçсен пичечĕпе четниксен пичетне пуснă.

Çакна пурне те юлашки вăхăтра Югославии халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар тыткăна илнĕ нумай çынсем лайăх каласа çирĕплетсе панă.

НИМĔÇ ОККУПАНЧĔСЕМПЕ ВĔСЕН ХУРЕШКИСЕН ЮГОСЛАВИРИ УСАЛ ĔÇĔСЕМ

ЖЕНЕВА, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен çапла пĕлтереççĕ: Югославири халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен вечен пленумĕ государство комиссийĕ организацилесси пирки решени йышăннă. Çав комиссии оккупантсемпе вĕсен хӳрешкисем — усташасем, недичевецсем тата Михайлович четникĕсем — Югославире тунă усал ĕçсене йĕрлесе палăртса тухмалла. Вырăнти комитетсем ĕнтĕ чылай материалсем пуçтарнă. Вĕсем Гитлер оккупанчĕсем çак виçĕ çул хушшинче Югослави халăхне мĕн чухлĕ асаппа хуйхă кăтартни çинчен лайăх каласа параççĕ.

ЮГОСЛАВИН ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ ТЕРРИТОРИЙĔНЧИ ОФИЦЕР ШКУЛĔСЕМ

ЖЕНЕВА, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Югославин ирĕке кăларнă территорийĕнче халăх çарĕ валли офицерсем вĕрентсе кăлараççĕ. Офицер шкулĕсем темиçе пин командир вĕрентсе кăларнă ĕнтĕ. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн верховнăй штабĕн бюллетенĕнче нумаях пулмасть Иванович генерал-лейтенантăн статьине пичетлесе кăларнă. Иванович унта çапла çырать: «Çамрăк югослав офицерĕсем нумай вĕреннĕ нимĕç полковникĕсене кашни утăмрах çапаççĕ, пирĕн подпоручиксен патрулĕсенчен Михайлович генералăн четникĕсем çав тери хăвăрт тараççĕ, вĕсем Югославие сутнăшăн, хăйсен халăхĕн юнĕшĕн илнĕ ылттăн цетинисене сумки-сумкипе пăрахса хăвараççĕ.»

США-ра ХĔÇПĂШАЛСЕМ ТУНИ

ВАШИНГТОН, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешӳллĕ штатсенче çар хатĕрĕсем тăвас ĕç управленийĕн руководителĕ Нельсон пресс-конференцире çапла каланă: США вăрçа хутшăннăранпа Пĕрлешӳллĕ Штатсенче 160.000 самолет, пĕтĕмĕшпе 31,5 миллион тонна таякан суту-илӳ суднисем, пĕтĕмĕшпе 4 миллион тонна ытла таякан вăрçă карапĕсем, 450.000 тупă, 130.000 танкпа ытти çапăçмалли машинăсем, 1.300 пин çар грузовикĕ туса кăларнă.

Нельсон каланă тăрăх, Пĕрлешӳллĕ Штатсенче хĕçпăшалсемпе вăрçă сооруженийĕсем çулталăкра 69 миллиард долларлăх тăваççĕ. Çитес çирĕм уйăх хушшинче кашни çул вăтамран 73 миллиард доллар расходламалла. Анчах хĕçпăшаллă вăйсем валли арçынсене илнĕ пирки рабочисен çитменни çав программăна пурнăçа кĕртме кансĕрлеме пултарĕ, тенĕ Нельсон.

Пĕлтĕр США-н пĕтĕм наци производстви 188 миллиард долларлăх пулнă, çав суммăран çурри тӳрех вăрçă расхочĕсем пулса тăраççĕ.

БОЛГАРИН ÇĔНĔ САЛТАКĔСЕМ ХУМХАННИ

СТАМБУЛ, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Стамбула килнĕ çынсем çапла каласа кăтартнă: çак кунсенче Болгарин Дунай хĕрринчи Лом ятлă хулинче хальçеç çара илнĕ çынсем хумханнă. Вĕсене çав портран Дунай шывĕ тăрăх Белграда — Болгарин Югославири оккупациллĕ чаçĕсене вăйлатма ямалла пулнă. Болгар салтакĕсем, çавăн çинчен пĕлсен, Белграда каймалли суднăсем çине ларма килĕшмен. Часах вара порта нимĕçсен жандарм отрячĕсем пынă. Вĕсем Болгар салтакĕсене арестлеме тата хĕçпăшалсăрлатма тытăннă. Салтаксен пĕр пайĕ тарса хăтăлма ĕлкĕрнĕ.

ГРАЖДАНЛА ХАЛĂХ БУРГАСПА ВАРНА ХУЛИСЕНЧЕН ТАРНИ

СТАМБУЛ, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çакăн пек хыпарсем килнĕ: Болгарин Хура тинĕс хĕрринчи портсем пулса тăракан хулисенчи гражданла халăх нимĕçсем çак портсенче оборона сооруженийĕсем тунинчен питĕ хăраса ӳкнĕ. Вĕсем Бургаспа Варна хулисенчен тата вĕсемпе кӳршĕри районсенчен тухса тарма пуçланă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ВЕНГРИРИ ИРСĔР ĔÇĔСЕМ

СТАМБУЛ, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрире ирсĕр ĕçсем тунине «конституциллĕ» тата «законлă» пек кăтартма тăрăшса, гитлеровецсем Венгрие оккупациленĕ хыççăнах салатса янă Венгри парламентне «тепĕр хут пухма» шут тытнă. Çак ĕçре нимĕçсен Венгрин пуканеллĕ правительстви çине тата «парламентăн» суйласа илнĕ йышĕ çине таянса тăраççĕ.

Венгрие вăрçăма пăрахтарма тăрăшнă оппозициллĕ депутатсене вĕлернипе тата оппозициллĕ партисен мĕнпур депутачĕсене тытса хупнипе лăпланмасăр, гитлеровецсем правительство партийĕн, «Венгри пурнăçĕ» ятлăскерĕн, руководствине те салатса янă тата çав партирен суйланă депутатсене «тасатнă».

Çапла «хатĕрленĕ» хыççăн вара вĕлерессĕрен, тытса хупасран е «тасатасран» хăтăлса юлнă депутатсене майăн 24-мĕшĕнче «парламента чаплăн уснă çĕре» хăваласа пухнă.

Бутапештран çапла пĕлтереççĕ: Венгрин аялти палатин ларăвĕнче темиçе вунă депутат çеç пулнă. Залра пуринчен ытла гитлеровецсем янă нимĕç тата венгер офицерĕсемпе чиновникĕсем ларнă. «Правительство» ячĕпе Стоян сăмах тухса каланă, вăл «парламента» «наци оборони» тĕлĕшпе тăратнă законопроекта çирĕплетме сĕннĕ.

«ТЮРКИШЕ ПОСТ» ХАÇАТĂН РЕДАКТОРНЕ ТЫТСА ХУПНИ

АНКАРА, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Стамбулра тухса тăракан «Тюркише пост» ятлă гитлерла хаçатăн редакторне — Ихсан Сабис пантюркиста Турци полицийĕ тытса хупнă.

СОВЕТ СОЮЗĔН ПОСОЛĔ ОТТАВАНА ÇИТНИ

ОТТАВА, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). ССР Союзĕн Канадăри посолĕ Зарубин юлташ паян Оттавăна çитнĕ.

Кашни колхозник икĕ çыншăн ĕçлет

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз вăрçă çулĕсенче акмалли çĕр лаптăкне 40 гектар ытларах пысăклатрĕ, выльăх-чĕрлĕхсен йышне чылай ӳстерчĕ. Колхозниксен хуçалăхĕсенче те выльăхсем йышлăланчĕç. Колхозра тăрăшса ĕçлекенсем çителĕклĕ тырпул, пахча-çимĕç илеççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă пуçлансан, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозран çĕрçĕн опытлă мастерĕсем, вăйлă арçынсем темиçе çĕр çын вăрçа тухса кайнă. Çĕршыв ыйтнипе колхоз Хĕрлĕ Çара чи лайăх лашасем панă.

Ĕç вăйĕ чакнă. Колхозри ватă стариксемпе карчăксем, çамрăксем фронта кайнисен вырăнĕсене тăнă. Вĕсем ик-виçĕ çыншăн ĕçленĕ, ĕçĕн тухăçлăхне ӳстерсе пынă. Колхозри бригадăсемпе звеносене халичченхи ĕçлеме тухайман шур сухаллă ватăсем тухнă. Звеносен ĕçне çул çитмен çамрăксем те хутшăннă. Вĕсене вăрçă явăçтарнă, вĕсем малтанхи кунсенчех вăрçăри пек, фронтовиксем пек ĕçлеме тытăннă.

78 çулхи Василий Григорьев вăрçăччен колхозри ĕçе хутшăнман. Вăрçă тухсан унăн ывăлĕ фронта тухса кайнă. Вăл хăй халĕ пĕтĕм вăйне-халне хурса ĕçлет.

— Вăрçă пырать вĕт, тăшманна çĕнтерессишĕн, çамраксемшĕн, ывăлсемшĕн ĕçлес пулать, — тет вăл хирте, сухаланă участоксем тăрăх утнă чух. Вăл пахалăх инспекторĕ. Çамрăксене ĕçлеме вĕрентет, вĕсен ĕçне пĕрмаях тĕрĕслесе тăрать.

66 çулхи Павел Иноходов та, хăй ватă пулнине пăхмасăрах, чĕререн тăрăшса ĕçлет. Сураки вăхăтĕнче пахалăх инспекторĕ пулнă. Пĕрремĕш бригадăра тырăсене лайăх акса хăварассишĕн тăрăшнă. 58 çулхи Лаврентий Лесников—колхозри агротехник, колхоз председателĕн заместителĕ. Вăл тырă акнă вăхăтра çĕр çывăрмасăр ĕçленĕ.

Суракинче 14 çулхи Петр Демидов та талăкра 4-шар сехет çеç каннă. Вăл ирирех хире тухса кайнă та, каçхине 10 сехетре ĕçрен кĕнĕ. Норма тăрăх 5 гектар вырăнне 8-шар гектар сӳреленĕ.

Леонид Курицын, Анатолий Иноходов культиваторсемпе 4-шар гектар сухаланă.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра нумай ĕçкунĕ ĕçлесе илнисене хисеплесси кулленхи йĕрке пулса тăнă. Кама та пулин хаклас пулсан, тӳрех унăн ĕçкунĕсен листокĕ çине пăхаççĕ. Унăн ĕçченлĕхне, пултарулăхне ĕçкунĕсен шучĕпе палăртаççĕ. Камăн ĕçкунĕ нумай—ăна чыс та хисеп, камăн ĕçкунĕ сахал—ăна колхозра та, килĕнче те хисеп çук. Сахалшăн та колхозра ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем çук. Кашни колхозник кунта мĕнле те пулин ытларах, сухаçăрах, лайăхрах, задание ик-виçĕ хут ирттерсе ĕçлесе, нумайрах ĕçкунĕ илме тăрăшать.

Колхоз уйăхĕнче колхозниксем мĕн чухлĕ ытларах тăрăшса, вăй хурса ĕçлеççĕ, çавăн чухлĕ ĕçкунĕ ытларах илеççĕ. Елена Иванова 1941 çулта пĕтĕм çемьипе 623 ĕçкунĕ туса 18,69 центнер тĕштырă илнĕ. Ашшĕ фронта тухса кайнă хыççăн, вăл икĕ çыншăн ĕçлеме тытăннă. Унăн ĕçлеме пултарайман çамрăк йăмăкĕсем 5. Вăл 1943 çулта 818 ĕçкунĕ тунă, сахал мар тырă илнĕ. Çавăн пекех Анна Зайцева иртнĕ çулта 475 ĕçкунĕ туса 60 пăта яхăн тырă илнĕ. Петр Емельянов, 55 çулхи старик, иртнĕ çулта иккĕн ĕçлесе 1182 ĕçкунĕ тунă, 127 пăт тырă илнĕ. Çавăн пек нумай ĕçлесе илнĕ колхозниксене Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра кашни килтех курма пулать. Çакă ĕнтĕ вăл, вăрçă вăхăтĕнче ĕç алли сахалланнă пулсан та, колхоз ĕç вăйĕпе тĕрĕс тата туллин усă курнине кăтартса парать.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн çитĕнĕвĕсем пĕтĕмĕшпех колхозниксен патриотизмлă туйăмĕпе ĕçри активлăхĕ нихçанхи пек мар вăйланнишĕн килнĕ. Колхозниксен ĕçченлĕхĕ пысăк пулнипе ĕнтĕ колхоз пĕтĕм ĕçсене вăхăтра пурнăçласа пырать, çулсерен вăйлă тырпул туса илет.

Хĕрлĕ Ялав илнĕ Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз кăçал та вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешет: кашни колхозникĕн 300—400 ĕçкунĕнчен кая мар тумалла.

Колхоз суракине пысăк пахалăхпа ирттерчĕ. Халĕ калчасем пĕр тикĕс шăтса тухнă. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсене 6 ĕç кунĕнче, сеялкăпа майăн 2-мĕшĕ тĕлне акса пĕтерчĕ. Акасса сеялкăпа акнă.

Пĕтĕмпе 359 гектар тĕштырă, 91 гектар техникăллă культурăсем, 30 гектар пĕр çулхи куракĕсем, 6 гектар коксагыз акса хăварнă.

Суракинче 12 звено ĕçленĕ. Кашни звено пĕр-пĕринпе ăмăртнă, вĕсем халĕ те ăмăртаççĕ. Кашни звено тата сухаçă хăйне пĕр кунлăха уйăрса панă участоксенче ĕçленĕ.

Суракинче малтанхи кунсенчех колхозри виççĕмĕш бригада (бригадирĕ Люлин юлташ) малта пынă. Ку бригада колхозри куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава халĕ те хăй аллинчех тытса тăрать. Бригадăри акакансем Петр Алексеев, комсомолец Андрей Самаров 13 ретлĕ сеялкăпа 6 гектар вырăнне 9-шар гектар, пĕрремĕш звенори комсомолец Виталий Портнов культиваторпа виçĕ гектар вырăнне 4,5-шер гектар, иккĕмĕш звенори Василий Алексеев 4,5-шер гектар сухаласа пынă. Бригада тырăсене чи малтан акса тĕрĕтнĕ.

Уйхир ĕçĕсене чĕререн тăрăшса тăвакан П. Леонтьев юлташăн бригади те суракире аван ĕçлерĕ.

— Акнă калчасене манăн бригадăри колхозниксем лайăх пăхса çитĕнтерме сăмах пачĕç,—тет Леонтьев юлташ, — пирĕн Люлин бригадипе ăмăртса, кашни гектартан 17—18-шер центнертан кая мар тырпул туса илессишĕн кĕрешетпĕр. Тылпа çапăçу фрончĕ пĕр пекех. Унта та, кунта та кĕрешӳ пырать, — тет бригадир-фронтовик Леонтьев юлташ.

Иккĕмĕш бригадăн бригадирĕ Георгий Емельянов фронта тухса кайсан, бригадăна унăн йăмăкĕ Александра Емельянова ертсе пыма тытăннă. Унăн бригадинче стахановецсен йышĕ ӳссех пырать. 17 çулхи Василий Свеклов тырă акнă çĕрте нормăна 150-шар процент тултарса пынă. Емельянова юлташăн пиччĕшĕ нумаях пулмасть тăван ялне, тăван бригадине вăхăтлăха курма таврăнчĕ. Вăл йăмăкĕн пултарулăхне курса савăнать.

— Тĕрĕс тăватăн, йăмăкăм, çапла ĕçлес пулать, фронтовиксем умĕнче парăмлă пулас пулмасть, — терĕ йăмăкне фронтовик.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Василий Васильевич Зайцев юлташ пĕччен мар, вăл хăй тавра актив пĕтĕçтернĕ. Опытлă çынсем, фронтовик Алексей Козлов, Николай Якимов, Александр Овчинников, Федор Скрипкин, Анна Щербакова, Савелий Портнов тата ытти нумай активистсем Зайцев юлташа ĕçре пулăшса пыраççĕ.

Нумаях пулмасть Зайцев юлташ, пĕтĕм актива пуçтарса, тырпула мĕнле пăхса ӳстересси, тырă вырма тухма хатĕрленесси çинчен каласрĕ. Канашлу питех те активлăн иртрĕ. Унта агитаторсем, бригадирсем, звеньевойсем тухса каласрĕç. Вĕсем татăклă ĕçсем палăртса хучĕç. ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Совнаркомăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне кăçал та хăйсен аллинчех хăварассишĕн кĕрешме обязательство илчĕç.

Çирĕп сăмах, çирĕп обязательство. Ăна ворошиловецсем пурнăçласах.

С. ШАДИН

ЕЛЧĔК РАЙОНĔ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Аш-какай комбиначĕн Шупашкарти выльăх пусакан пунктне производствăна шута илме пĕлекен старши бухгалтер кирлĕ. Çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, Кировский поселок, ул. Тельмана, 6.

Чăвашсельэлектро конторине главнăй бухгалтер, материалсем тĕлĕшпе ĕçлекен бухгалтер, секретарь-машинистка, инженер-электрик тата гидротехник кирлĕ. Çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 7.

2—1.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 03151 Типографи №1. Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59X42 п. л. Тираж 14.400 экз.